Инв. № 3176
VI-4
3176

Н. АЙЗМАН

# ПАТРИОТСЕМ

ЧӐВАШГОСИЗДАТ — 1941

Н. АЙВМАН

# ПАТРИОТСЕМ

ПЬЕСА

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941

## ВЫЛЯКАНСЕМ

**Иван, колхозник, 27 çулта.**
**Марье, унăн арăмĕ.**
**Малани, вĕсен амăшĕ, ватăскер.**
**Петĕр, Ивансен кӳрши.**

---

Иван пӳрчĕ. Кăмака, сĕтел-пукансем. **Урамалла** икĕ чӳрече, чечексем т. ыт. те. Таса пӳлĕм.

**Малани** (*тултан кĕрет*). Кăнтăр апачĕ те иртрĕ паян... Ку Иван халиччен мĕн туса тă-рать-ши? Апачĕ те вучах çинчех... Пĕр шухăш-ласан савăнас килет. Ĕç патĕнче çав тери хар-сăр вара. Пĕр ĕçе тытăнать те вара, туса пĕ-термесĕр ниепле хăпмасть. „Улми йывăççинчен инçете ӳкмест", теççĕ. Ĕлĕк ашшĕ çавăн пек-чĕ... Ĕнер каç кĕнеке вулама ларчĕ те, кĕçех тул çутăлса каятчĕ. Çывăр, Иван, çывăр, тетĕп. Ирхине ĕçе кайма йывăр пулать, тетĕп. Çук,—тет,—кая хăварсан, каю шăтать,—тет. (*Пауза.*) Ку апата тем тумалла ĕнтĕ. Кăвар çинчен ан-тарсан—сивĕнсе кайĕ, аплипех тăрсан—хĕрхӳ-ленсе кайĕ тата.

**Иван** (*кĕрет*). У-ф!.. Анне килтех иккен. Шыв ярса пар-ха, анне, çăвăнас.

**Малани** (*шыв ярса*). Çак кăмкана тула çакас тесе миçе хут каларăм эп сана.

**Иван.** Вӑхӑт тупӑнать-и-ха.

**Малани.** Урай йӗпенет тетӗп-ҫке.

**Иван.** Ну, паян ӗҫлерӗмӗр те... Витерен кӑларнӑ тислӗке пӗтӗмпех уя турттартӑмӑр.

**Малани.** Пӗтертӗр-и?

**Иван.** У-у, тепӗр ун чухлӗ пар.

**Малани.** Калатӑп вӗт, пӗтермесӗр таврӑнас ҫук тесе. (*Алшӑлли парать.*) Ме, акӑ, шӑлӑн.

**Иван.** Марье килмерӗ-и-ха?

**Малани.** Ҫук-ха. Ачи чиперех пулсан татахчӗ хӑть.

**Иван.** Виҫӗмкун кайса килнӗренпе ниепле те каяймарӑм. Ун чухне те ачине чӳрече витӗр ҫеҫ кӑтартрӗ. Шала кӳртмеҫҫӗ. Больници те ҫывӑхах мар та...

**Малани.** Хам кайса пӑхас тенӗччӗ, лашисем ерҫмерӗҫ.

**Иван.** Больницӑра унта врачсем та-ха, эпи карчӑксем мар. Чиперех пуль-ха. (*Кӗнеке вулама ларать.*)

**Малани.** Э-э, ача ҫуратсан чирӗ тупӑнать вӑл часах.

**Иван.** Паян касчен кайса килес пулӗ. Бригадиртан лаша ыйтас та...

**Малани.** Эпӗ, ӗлӗк, ҫавӑн пек, Матруне ҫуратнӑ чух шалт аптрарӑм вӗт. Кӗркунне, авӑн ҫапатпӑр та, итем ҫинчен тыр ҫӗклекен вӑйпитти ҫын никам та ҫук. Асласу ватӑ, аҫу Германь вӑрҫинче... Пӗр авӑн тырра ҫӗклесе пӗтериччен ман пилӗк касма та пуҫларӗ. Ун

чух хальхи пек больница таврашне кайма пĕлмен. Каяс пулсан та—„çемçешке хĕрарăм“, тесе мăшкăлама пикенетчĕç. Анкартинче, тулли михĕ çĕклесе пынă çĕртех ача çуратма тытăнтăм... Эй, курнă-çке, курман мар. Аслаçу та хĕрарăма нимĕн вырăнне те хумастчĕ. (*Пауза.*) Апатне ларса çи, ачам.

**Иван.** Халех.

**Малани.** Апачĕ сивĕнет тата.

(*Иван кĕнеке вулама тытăнать. Çав вăхăтра пӳрте Петĕр кĕрет.*)

**Петĕр.** Здрасте.

**Иван.** Иртсе лар. (*Пауза.*) Мĕн тăратăн?

**Петĕр.** Ывăнман та-ха. (*Пауза.*)

**Иван** (*çиме ларать*). Мĕн нимĕн те шарламастăн? (*Пауза.*) Чирлемерĕн пуль те.

**Петĕр.** Çук. (*Пауза.*)

**Иван.** Çиме лар.

**Петĕр.** Тавтапуç, пĕр хыпар илтнĕ хыççăн хырăм тăранса ларчĕ-ха.

**Иван.** Мĕн пулчĕ апла?

**Петĕр.** Радио каланине илтмен-и эс?

**Иван.** Илтмен. Эп халь çеç уйран килтĕм те... Мĕн пулнă?

**Петĕр.** Паян ирхине, 4 сехетре, нимĕç фашисчĕсем пирĕн хăшпĕр хуласем çине бомбăсем пăрахнă, тет. Фашистсен çарĕ пирĕн чикке тапăннă, тет.

**Иван** (*пауза*). Ну-у? (*Çиме пăрахать.*)

**Петĕр.** Халь çеç, апат çисе ларнă çĕрте илтрĕм. (*Пауза.*)

**Иван.** Ăçтан пĕлтерчĕç?

**Петĕр.** Мускавран, Молотов каларĕ. Сан радио ĕçлемест-и-мĕн?

**Иван.** Чиперех те-ха... (*Пауза.*) А договор?

**Петĕр.** Пĕтнĕ ĕнтĕ вăл.

**Иван.** Гитлертен пурне те кĕтме пулать. Йытă вăл.

**Петĕр.** Урнă йытă.

**Иван.** Каяс, тĕплĕрех ыйтса пĕлес.

**Малани.** Апатне çисем тата.

**Иван.** Какой апат шухăшĕ халь...

**Петĕр.** Мана ĕненместĕн пулать?

**Иван.** Ĕненменрен мар. Эп халех. (*Каять.*)

**Малани.** Мĕн çитмест-ши çав шуйттана?

**Петĕр.** Мĕн çитменни паллă-ха вăл. (*Пауза.*)

**Малани.** Мĕн пирки халăх юнне тăкмалла-ши? Пирвайхи вăрçăра ман упăшка пуçне çирĕç шуйттансем. Ĕмĕр-ĕмĕр хăраххăн пурăнмалла турĕç. Ма халер лекмест-ши çавсене, пĕрех хут. Чĕлхисем çине ма ӳпне çăпан тухмасть-ши? Хамăн вăй пулсан, хамах кайса чиксе пăрахнă пулăттăм. Питне тăла варри çакнăскер... Гитлер ятлăччĕ-и-ха çав?

**Петĕр.** Çапла, мĕн чухлĕ çĕр çавăрса илчĕ, тата çитмест киремет пуçне.

**Малани.** Ман ылхав çиттĕрех шуйттан пуçанине! Халех арçынсене пухма тытăнĕç ĕнтĕ. Иван каллех каять пуль ĕнтĕ.

**Петĕр.** Эпир каймасан—кам каймалла тата.

**Иван** (*кĕрет*). Чăнах иккен. (*Амăшĕ сĕлкĕш*

*ларнине асăрхаса.*) Эсĕ каллех кулянма тытăннă ĕнтĕ.

**Малани.** Çук, эп ахаль çеç... (*Тула тухса каять.*)

**Иван** (*пауза*). Мобилизаци çинчен шарламарĕç-и-ха?

**Петĕр.** Çук-ха. Ну, эс мĕнле шухăшлан?

**Иван** (*пауза*). Мĕн шухăшлас? Каяс пулать.

**Петĕр.** Çапла та-ха, анчах çемье...

**Иван.** Хăть те темле шухăшласассăн та каймаллах. Каятăп.

**Петĕр.** Эпĕ те юлмастăп ĕнтĕ. Арăм пĕччене юлать те ĕнтĕ...

**Иван.** Пурнаççĕ. Аптрамĕç. Ман хамăн та вăн—анне ватă, арăм больницара... Ничево.

**Петĕр** (*пауза*). Кайса арăма пĕлтерес. (*Пауза.*) Каясса пĕрле кайăпăр. (*Каять.*)

**Иван.** Юрать. (*Пауза.*) Заявлени çырас-ха, халех. (*Çырма ларать.*) Так... И-и, аптрамаççĕ-ха... Кĕнекисем юлччĕр-ха, çаплах... Марье патне юланутпа кайса килмелле пулать пуль. Ăна систермесĕр кайсан аван мар. Ачине курас килекен пулчĕ. Аннене мĕнле каласа ăнлантарас?

**Малани** (*кĕрет*). Эсĕ ĕнтĕ, ачам, каллех пире пăрахса хăваратăн пуль-ха?

**Иван.** Эпĕ пĕччен мар ĕнтĕ, халăхпа пĕрле.

**Малани.** Халăхпа пĕрле пулсан татахчĕ хăть. Эсĕ иртнĕ вăрçăра та хăв ирĕккĕнех тухса кайрăн та...

**Иван.** Киле килсе вĕлерессе кĕтсе лармалла-им?

**Малани.** Каллех ирĕккĕнех каятăн ĕнтĕ. Эпĕ сана пĕлетĕп.

**Иван.** Эсĕ ан кулян-ха, анне. Каясси ҫинчен сăмах та пулман вĕт-ха. Хăҫан каяссине килсе калĕҫ, унчухне кайăпăр.

**Малани.** Халăхпа пĕрле кайсан татах хăть.

**Иван.** Кирек хăҫан та пĕрре каймалла вĕт-ха.

**Малани.** Сан каяс шухăшах ĕнтĕ... (*Вăрттăн ĕсĕклет.*) Эсĕ кайсан, килҫурт юхăнма пултарать вĕт.

**Иван.** Килҫурт?! Эсĕ хăвăн кил-ҫуртунтан аякках шухăшлаймастăн иккен ҫав. Эпир каймасан, фашистсем килсе пĕтĕм колхозсене вут тĕртсе хыптарĕҫ. Пĕтĕм кĕтӳри выльăхсене хуса кайĕҫ. Мĕнпур тырпулла тытса илĕҫ. Хабрăк-заводсене тустарĕҫ. Ун чухне ăҫта кайса кĕрес-ха?! Ĕлĕкхи хресченсем пек улпутсем аллине кĕрсе ӳкес килет-и-мĕн? Кунсерен ҫурăм тăрăх хурăн хулли чуптăр-и?

**Малани.** Вăрҫи кунта ҫитиех килмест пуль те-ха. Кунта ҫитме парас ҫук.

**Иван.** Ҫынна шанса ларма юрамасть. Халь пĕтĕм халăх пĕр пулса, тăшмана хирĕҫ тухас пулать. Эпĕ танкист! Унта халь шăп ман пеккисем кирлĕ те. Урнă белофинсемпе ҫапăҫнă чухне те малти ретре пулса! Халь те манăн малта пулмалла.

**Малани.** Унтан чиперех ҫавăрăнса килтĕн хăть, вăл аван.

**Иван.** Халь те ҫавăрăнса килетĕп.

**Малани.** Кинпе пĕр сăмах калаçмасăрах темле шухăш тытса ларан.

**Иван.** Марье вăл ăнланакан çын. Эп мĕн шухăшланине нихçан та хирĕç пымасть.

**Малани.** Пăх-халь ку, халь тухса каяс пекех калаçать.

**Иван.** Пирĕн, комсомолецсен, пример пулмалла ĕнтĕ.

**Малани.** Хăтланах ĕнтĕ, хăтланах.

**Иван.** Халь каясси паллă мар вĕт-ха. Мĕн хыпăнса ÿкрĕн-ха.

**Малани.** Пĕлетĕп ĕнтĕ. Виçĕмçул хĕлле те çапла мана улталасах тухса кайрăн. (*Каять.*)

**Иван.** Чунĕ хурланать пулĕ çав. Ничево. Хăвăртрах тухса кайсан, макăрма ĕлкĕрейместха вăл. Кайса арăмпа калаçас та, унтан фронта. Мĕн кирлĕ пеккисене чиксе хатĕрлемелле пуль. Военный билет çумрах-ха. Апат-çимĕçрен аптрамăпăр. Кĕпе-йĕм... Шур кĕпе-йĕм пĕтĕмпех арчара. Çăра уççине Марье хăйпе пĕрлех илсе кайнă-ши? Е аннене парса хăварнă-ши? Аннерен ыйтмалли çук-ха. Ну, юрĕ. Вăл пысăк ĕçех мар. Мĕнле те пулин майлăпăр.

**Малани** (*кĕрет*). Мельник Павăлĕ правленине пыма каларĕ вăн, тем, питĕ кирлĕ ĕç пур, тет.

**Иван.** Митинг тăвасси çинчен пуль.

**Малани.** Мана та пыма хушрĕ те... Эсĕ кайсан килте никам та юлмасть.

**Иван.** Эпĕ кайса килем-ха. Кирлех пулсан сана та килсе систерĕп. (*Каять.*)

**Малани.** Кантăка уçса уçă сывлăш кӳртес-ха. Пĕтĕм чун тăвăнса çитрĕ паян. (*Кантăка уçать.*)

**Оратор сасси.** Икĕ питлĕ Гитлер çарĕ... урса кайнă фашистсем пирĕн граница çине килсе тапăннă!..

Партипе правительство хамăрăн никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çара тата Тинĕс Флотне Совет чиккисене фашистсенчен тасатма приказ панă.

**Малани.** Хамăн та кайса пăхас-ха. Мĕн калаççĕ çавăнта. Шыв ăсса килмелле витрине илсех каям-ха. (*Кантăка хупать те каять. Пауза.*)

**Марье** (*ачине йăтса кĕрет*). Вот-те-е!.. Пире никам та кĕтсе илмест, пепкем! Ăçта кайса пĕтнĕ-ши? Алăксене те питĕрмен... Ну, выртах çакăнта, ан макăр. Ай-яй, ăш хыпса çитрĕ. Сăмаварта вĕретнĕ шыв пулмалла та... Çук. Сăмаварне лартас-ха. (*Пӳлĕме кĕрет.*)

**Малани** (*кĕрет*). Вăт ирсĕрсем! Каланине итлесен, чун çӳçенет. Ĕлĕкхин пек власть тăвасшăн, тет. У-у, çĕрçăтмансем!.. (*Аллинчи пушă витрине асăрхаса.*) Ку витрепе мĕн тăвасшăнчĕ çав эпĕ. Пĕтĕмпех пăтрашса кайрăм. Киле мĕн тума килтĕм-ха. Э-э, çул валли пуçтарас терĕм-çке. Пирĕн анчах мар. Хăйсен ирĕкĕпе каякансем татах та пур, тет. Каймалла пулсан, паянах кайтăр. Каллех хĕрарăма выльăх выррăнне хумалла тăвасшăн иккен. Çук, пулаймĕ, ывăлсем ӳссе çитнĕ-ха. Мĕн-мĕн чиксе каять-ши? Ыйтса юлаймарăм. Виçĕмçул кайнă чухне икĕ мăшăр кĕпе-йĕм чикнĕччĕ пулас...

Супăнь, алшăлли. Ик-виç кунлăх апат чикмелле пуль. (*Арча уçса кĕпе-йĕм илсе котомкăна чикет.*) Çак кĕпе-йĕм çĕтĕличчен каялла таврăнса килмелле пултăрах. (*Супăнь тата ытти япаласене те вырнаçтарать.*) Кине мĕнле систерес-ши?.. Мĕн çитмест-ши çав урнă йытта? Ма аçа çапса пăрахмасть-ши пĕрех хут.

**Марье** (*кĕрет*). Мĕн пĕчченех çĕмĕрлетĕн, анне?

**Малани.** Ах, тур! Кин çитнĕ тем. Çуранах-и?

**Марье.** Машинăпа. Ларивансем кооператива тавар патне пынă та...

**Малани.** Лар, лар, ара. Мĕншĕн ура çинче тăран?

**Марье.** Ларсан та, тăрсан та аптрамаллах мар. Сăмавар лартрăм та-ха...

**Малани.** Çăмăлах çуратрăн-и?

**Марье.** Чиперех. Ачи тап-таса вара, шыври пулă пекех, пĕр вырăнта ниепле те выртмасть.

**Малани.** Ăçта вăл?

**Марье.** Акă.

**Малани.** Э-э, çавна та асăрхаман. Ну-ка, ăçтаха вăл. (*Уçса пăхать.*) Пăх-халь, епле карăнать. Маттур ача çуралнă. Ну, витес ачине, витес. Унсăрăн тяппи шăнать тата. (*Марьене.*) Макăрса аптратмарĕ-и?

**Марье.** Çук. Кăкăр ĕмет те сывăрать, ĕмет те сывăрать (*Пауза.*) Леш вĕçе, правлени умне мĕн тума ара çав териех халăх пухăннă.

**Малани.** Колхоз пухăвĕ пуль.

**Марье.** Иван та унтах пуль?

**Малани.** Çавăнта ĕнтĕ.

**Марье.** Мана илме пыратăп, тетчĕ-çке вăл.

**Малани.** Тем ерçеймерĕ. Каçхи кӳлĕм пыма шут тытнăччĕ те вăл. Ху килсе çитрĕн вăн.

**Марье** (*котомкăна асăрхаса*). Ку котомкине ăçта кайма хатĕрленĕ тата?

**Малани.** Каясси-мĕнни... Иван каять пуль ĕнтĕ.

**Марье.** Ăçта?

**Малани.** Каламарĕ вăл. Таçтарах каяççĕ-çке ĕнтĕ.

**Марье.** Шоферсен курсне каймалла, тетчĕ вăл.

**Малани.** Çавăнта пуль.

**Марье.** Хăçан каймалла тет вара?

**Малани.** Те паянах каяççĕ ĕнтĕ вĕсем, те ыран. Çавăнта, колхоз пуххинче паллă пулать ак.

**Марье.** Чуста хурса, çемçе апат пĕçерсе парса ямаллаччĕ пуль.

**Малани.** Хам та çавна шухăшлатăп. Эпĕ кайса шыв ăсса килем-ха.

**Марье.** Хамăн каймаллаччĕ те...

**Малани.** Эсĕ труках ĕç патне ан çыхлан-ха. Сывлăху малалла кирлĕ пулĕ. (*Каять.*)

**Марье.** Мĕн пулнă ку аннене? Пĕрре те ытти чухнехи пек мар. (*Кантăкран пăхать.*) Пăххаль, утти те улшăнса кайнă. Мĕн пулнă-ши? Иван кӳрентернĕ-ши? (*Кантăка уçать.*) Мĕн чухлĕ халăх. Мĕн пулнă-ши кун пекех?

**Оратор сасси.** Пирĕн халь, ĕç дисциплинине татах ытларах çирĕплетсе, хамăрăн никам çĕн-

терейми Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Флотне пулăшу памалла. Тыл çирĕп пулсан, фронт та çирĕп пулĕ. Эпир, колхозниксем, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхпа пĕр пулса, хамăр тăван çĕршывшăн яланах кĕрешме хатĕр. Партипе правительство чĕнсен, эпир хамăр çине вăрçăпа килнĕ Гитлера хирĕç çак самантрах çапăçăва тухса, мĕн çĕнтеричченех кĕрешме хатĕр. Эпĕ хам ирĕккĕн паянах фронта каятăп. Тĕп пултăр фашизм!

**Сасăсем.** Тĕп пултăр фашизм! Урнă йытăсене вилĕм!

**Марье** (*хытсах каять. Чылай вăхăт иртсен, шăппăн*). Вăрçă пуçланнă иккен?!. Вăрçă... Фашист Гитлер... (*Кантăка хупать.*) Гитлерла Германи вăрçăпа килет иккен. Эпĕ мĕншĕн халăх лăках тулнă тетĕп.

**Иван** (*кĕрет*). Марье килнĕ-çке! (*Ала парать.*)

**Марье.** Килтĕм те-ха.

**Иван.** Мĕнле? Чиперех-и?

**Марье.** Чиперех.

**Иван.** Ывăл терĕн-и-ха?

**Марье.** Ывăлĕ ывăл та-ха...

**Иван.** Ывăл! Калатăп вĕт сана ывăл пулать тесе.

**Марье.** Йăнăшмарăн пулать.

**Иван.** Ăçта-ха, кăтарт-ха.

**Марье.** Ве-еç, выртать.

**Иван** (*ачипе йăпанса*). Ухх, герой!.. Епле маттур вăл. (*Арăмне.*) Каçар ĕнтĕ, эпĕ сана илме пыраймарăм. Вăхăчĕ те... Эсĕ мĕн çав териех салхуллă, чирлеместĕн пуль те?

**Марье**. Çук.

**Иван**. Мĕн пулчĕ тата?

**Марье**. Мĕн пирки митинг пулчĕ çав?

**Иван**. Савăнăçлă хыпарах мар.

**Марье**. Пĕлетĕп.

**Иван**. Эсĕ лерех илтрĕн-и?

**Мерье**. Кунта, акă кантăкран тăнларăм.

**Иван**. Эпĕ каланине илтрĕн-и?

**Марье**. Çук. Колхоз председателĕ каларĕ.

**Иван**. Эпĕ каланине илтеймерĕн пулать?

**Марье**. Çук.

**Иван**. Шел. Эсĕ илтнĕ пуль тесе.

**Марье**. Çук, илтмен.

**Иван**. Да-а. (*Пауза.*) А, вот, Марье, сăмах майăн... Эпĕ паян Хĕрлĕ Çара тухса каяс... Эсир мансăрăн мĕнле пурăннă пулăттăр?

**Марье**. Мĕншĕн апла калатăн?

**Иван**. Так, ахаль, сăмахран...

**Марье**. Пурăнкалăпăр... Çаплах, мĕн эпир ĕçлеймен çынсем-и? Ниçта тухса курман çынсем-и?

**Иван** (*пауза*). Тата тепĕр сăмах калам. Енчен, эпĕ суранланса килсен?

**Марье**. Ывăлу ӳсет. Иксĕмĕр мĕн виличчен пăхăпăр.

**Иван**. Апла пулсан эпĕ кайни сире пĕрре те шиклентермест?

**Марье**. Эпĕ шиклĕ çуралман...

**Иван**. Аха! (*Пауза.*) Акă, пĕр хут татăкĕ çине, çапла çырас терĕм. Чи малтан, сана кăтартса пăхас терĕм. Эсĕ мĕн калать-ши, терĕм?

**Марье** (*хутне вуласан, пĕр вăхăт Ивана куçран пăхса тăрать*). Начар.

**Иван.** Мĕн начар?

**Марье.** Çакăн пек çыраççĕ-и вара?

**Иван** (*тĕлĕнсе*). Эсĕ хирĕç?!

**Марье.** Кама?

**Иван.** Мана.

**Марье.** Эпĕ сана хирĕç мар.

**Иван.** Кама хирĕç тата.

**Марье.** Санăн хутпĕлменлĕхне. Пăх-ха, миçе йăнăш.

**Иван.** А-а, чăнах-çке. А эпĕ ун çинчен шухăшламан та.

**Марье.** Ме. (*Парать.*) «Кайма каска пултăр, килме такăр пултăр», тенĕ ĕлĕк салтака ăсатнă чух, эпĕ сана ўрăхла ырă сунам. Кайма такăр пултăр, килме те такăр пултăр.

**Иван.** Тавтапуç, Марье. Эпĕ сана кун çинчен сасартăк систерме хăраса тăтăм. Эсĕ те анне пек макăрса пĕтĕ, терĕм.

**Марье.** Çук. Эпĕ пĕлетĕп камшăн, тата мĕншĕн кайнине. Шел, çак самантра алăри ача пулчĕ. Эпĕ хам та ним шухăшласа тăман пулăттăм.

**Иван.** Нумайăшĕ, митингра, кайма сăмах пачĕç.

**Марье.** Хĕрсем те пур-и?

**Иван.** Пур. Моççи Матренĕ. Вăл халь çех сестрана вĕренсе тухнă.

**Марье.** Анне пĕлет-и?

**Иван.** Пĕлмест.

**Марье.** Сасартăках пĕлтерес мар ăна.

**Иван.** Пĕтĕмпе тавçăрса илеймест çав-ха.

**Марье.** Эпĕ унпа хам калаçăп. Хĕрарăм хĕрарăма итлерех парать.

**Иван.** Акă сăмавар та вĕрерĕ. (*Сĕтел çине лартать.*) Лар. Чей ĕçĕпĕр. (*Чĕрĕк эрех кăларса.*) Пĕрер черкке куна та тутанса пăхăпăр. (*Чей ĕçеççĕ.*)

Малани кĕрет. Нимĕн шарламасăр тулли витресемпе пÿлĕме каять.

**Иван.** Паллах, анне кăмăлсăр çÿрет. Тухса каясси çинчен мĕнле пĕлтерес-ха ăна?

**Марье.** Эп хамах. Эс ан шарла. Анне, тух-ха кунта?

**Малани сасси.** Халех тухатăп та-ха. Пĕр япала шкапа хунăччĕ те... Ниçта та курăнмасть.

**Иван.** Эсĕ ăна хĕрарăмăн ĕлĕкхи пурнăçĕ çинчен аса илтер.

**Марье.** Хамах пĕлетĕп. (*Амăшне.*) Чей сивĕнет, анне.

**Малани** (*кĕрет*). Чим-ха, кĕлете хунă пулинех. Ăçта çухалчĕ ку ман? (*Тулалла тухать.*)

**Иван.** Мĕн шырать-ха вăл?

**Марье.** Пĕлместĕп.

**Иван** (*кулса*). Пĕрер патак çĕклесе кĕрет-и-ха?

**Малани** (*кĕрет*). Мĕн каласшăнччĕ эс мана? (*Аллинче шăрттан.*)

**Марье.** Лар-ха, çакăнта, юнашар.

**Малани** (*ларать*). Ну, мĕн?

**Марье**. Эсӗ, анне, нумай пурӑнса курнӑ, ӗлӗк патша саманинче те пурӑнса курнӑ ҫын. Ӗлӗкхи пурнӑҫра хӗрарӑм тени йытӑ вырӑнӗнче ҫех пулнӑ вӗт-ха...

**Малани**. Эсӗ мӗн калассине ахалех сисрӗм. Эпӗ сан сӑмахна итлем мар-ха... Кӳр-ха черккине, эпӗ хам пӗр сӑмах калам. (*Черкке тытса ура ҫине тӑрать.*) Тӑр, Иван. (*Иван тӑрать.*) Ну, ывӑлӑм, эсӗ митингра каланине илтрӗм эпӗ. Каятӑн пулсан, кай.

**Иван**. Мӗн эс, анне?! Чӑнласах калатӑн-и?

**Малани**. Тӑшман умӗнче арслан пек хаяр пул, сивӗ ҫил пек ҫивӗч пул, вут-кӑвар пек хӗрӳллӗ пул. Пирӗн ҫакӑн пек телейлӗ пурнӑҫа аркатса пире чура тӑвас текенсене тӗп тумасӑр киле ан таврӑн.

**Иван**. Анне, кӳр-ха пӗрре ыталаса чуптӑвам сана куншӑн. (*Чуптӑвать.*) Хӑҫан шухӑшна улӑштартӑн эс, анне?

**Малани**. Урӑхла шухӑшлама май ҫук, ачам. Каҫар, паҫӑр урлӑ-пирлӗ юмахланӑшӑн. Ӑнланса ҫитейместпӗр мар-и. Ну, ӗҫер ха ӗнтӗ, ачам.

**Иван**. Ну, анне, эпӗ киличчен лайӑх пурӑн. Пӗр-пӗринпе ан хирӗҫӗр. Урӑх ним те каламастӑп. (*Ӗҫет.*)

**Малани**. Кин, эсӗ те ӗҫсе пар.

**Марье**. Мана ӗҫме юрасах та каймасть те... Ҫапах та тытса парам. Ну, Иван, ҫак ача лартма пуҫличчен тӑшмана тӗппипех пӗтерсе таврӑнмалла пултӑр. Эпир, колхозра канма пӗл-



Чувашская книжная палата
г. Чебоксары Чувашской АССР

месĕр сире пулăшса тăрăпăр. Сан вырăна тракторист пулса хам ĕçлетĕп. Вĕренсе тухни самай пулать те, манман пуль-ха. Çыру çырсах тăр.

**Петĕр** (*кĕрет*). Ну, Иван, хатĕр-и эс?

**Иван.** Хатĕр. (*Урамра хăватлă юрă янăраса каять.*)

**Петĕр.** Урамра машина кĕтет, юлташсем те кĕтсе тăраççĕ.

**Иван.** Ну, Марье, сывă пул. Ывăла лайăх пăхса ӳстер. (*Чуптăвать.*)

**Марье.** Чипер çавăрăнса килмелле пултăр.

**Иван.** Килетпĕр.

**Марье.** Ачине мĕн ятлă çыртарас?

**Иван.** Çыртар Иван тесе. Эпĕ килеймесен ман пек тепĕр Иван пултăр. (*Амăшне.*) Ну, анне, чипер юл. Ан кулян. (*Чуптăвать.*) Айда, Петя. (*Котомкине çакать.*) Каяр. Эх, астуман та. (*Ачине.*) Ну, этем пуласси, сывă пул. Çулпа мар, сехетпе ӳс. (*Чуптăвать.*)

**Малани.** Апат-çимĕç латти пулмарĕ те ĕнтĕ. Ме, çак шăрттана илсе кай. Укçа илтĕн-и хăть?

**Иван.** Илсе, çителĕклĕ. (*Каяççĕ.*)

**Малани.** Уй хапхинчен ăсатса ярам хăть. (*Тухнă чух.*) Эс, кин, ан тух, вĕрĕлĕн тата. (*Каять.*)

**Марье.** Кайрĕç. (*Кантăкран пăхать.*) Маттур боецсем пулаççĕ кусем. Ух, мĕн чухлĕ халăх тухнă ăсатма. (*Урамра юрă янăраса тăрать.*)

Гитлер чикĕ урлă каçнă
Халăха чура тума!
Атьăр тăрăр, харăс утăр!
Гитлер пуçне тĕп тума!

**Марье.** Епле паттăрăн утаççĕ. Çук, пирĕн Совет халăхне нимĕнле тăшман та çĕнтерес çук! (*Юрă аякра илтĕнет. Марье пуçĕнчи тутрине салтса суллать.*)

ЧАРШАВ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Редактор Г. И. Краснов.

Под. к печ. 29/VIII-41 г.
НТ 6504 Об'ем 0,63 п. л.
Тир 4000 экз. Зак. № 397.

г. Чебоксары, тип. № 1
Управл. издательств и
полиграфии при СНК
ЧАССР.

5
O.I.K.

Цена 50 коп.

Н. АЙЗМАН

# ПАТРИОТЫ

пьеса

Госиздат ЧАССР
1941